# Наци библиотеки 140 çулта

Кăçал Чăваш наци библиотекине йĕркеленĕренпе 140 çул çитет.

Хусан кĕпĕрнин пуçлăхĕ ирĕк панипе халăха çутта кăларас, культурăна явăçтарас тĕллевпе XIX ĕмĕрте Шупашкарта вулавăш уçнă. Библиотека хастарĕсен пĕрремĕш пухăвĕ кăрлач уйăхĕн 24-мĕшĕнче иртнĕ. Халăх малашлăхĕ пирки шухăшлакан çынсем вулавăша кĕнекесем илсе килнĕ. Ырă ку йăла паянччен сыхланса юлни савăнтарать.

Кăрлачăн 26-мĕшĕнче Чăваш наци библиотеки «Кĕнеке алăран алла. Хамăр тата тăхăмсем валли» кĕнеке парнелекенсен кунне ирттерет. Сăмах май, пĕлтĕр çак акцие Раççей гуманитари наука фончĕ (299 экземпляр), Раççей кĕнеке палати (195), Раççей Федерацийĕн Тĕп банкĕ, Раççей наукăсен академийĕн «Академкнига» издательстви, ЧР Президент Администрацийĕ (702 экземпляр), ЧР Культура министерстви (68) тата ыттисем Чăваш Ен тĕп вулавăш фондне пуянлатас ĕçе хастар хутшăннă. Мускав Правительстви вара библиотекăна 1001900 тенкĕлĕх 3 пин экземпляр кăларăмпа тивĕçтернĕ.

Палăртса хăварар: пĕлтĕр библиотека авăн уйăхĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа раштав уйăхĕн 20-мĕшĕччен «Кĕнеке парнеле» ыр кăмăллăх акцийĕ ирттернĕ. Çак тапхăрта вăл 5 пине яхăн тĕрлĕ кăларăмпа пуянланнă. Çулталăк вĕçĕнче парнеленĕ кăларăмсен шучĕ 18968 экземпляра çитнĕ. Вĕсенчен 15425-не республикăри ытти вулавăша валеçнĕ.

*Кротова, Т. Наци библиотеки 140 çулта : [Чăваш Республикин наци библиотекинче кĕнеке парнелекенсен кунĕ иртни çинчен] / Т. Кротова // Хыпар. – 2011. – 25 кăрлач. – С. 1.*